К84.09(=Чув)
А65
Ч-42255

Михаил Андреев

# ШУР ÇĂЛТĂРСЕМ ÇУНĂ ЧУХ



Национальная библиотека ЧР
4-042255

ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖЕ
обозначенного здесь срока

К 84.09(=Чув)
А 65

Обязат. экз.

## Михаил Андреев

# Шур çăлтăрсем çунă чух

ПРОВЕРЕНО
2010 ОКТ 2012

N-49.2.25

Шупашкар
«Çĕнĕ Вăхăт»
издательство
2009

УДК 821.512.111
ББК 84(2Рос=Чув)6-5
А 65

**Михаил Андреев**
А 65 **Шур çăлтăрсем çуна чух**. – Чебоксары, «Новое Время». 2009. – 64 с.

*Çак кĕнекене çыраканĕ — Михаил Андреев. Вăл Шупашкарта пичетленсе тухнă 3 кĕнеке авторĕ.*

*Сăвăç Чăваш Республикинчи Куславкка районне кĕрекен Минкĕш ялĕнче çуралса ÿснĕ. Пьесăсемпе калавсем те çырать, музыкăна, спорта юрататъ.*

*Хуплашка питĕнче — Михаил Андреев сăн ÿкерчĕкĕ, хыçалта — унăн çемйи.*

ч-42255
НАЦИОНАЛЬНАЯ БИБЛИОТЕКА ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ
ПРОВЕРЕНО 20/10 ОКТ 2017

© Андреев М.А., 2009

## ЧĂВАШ ÇĔР-ШЫВĔ

Ытарайми Чăваш çĕр-шывĕ!
Мĕн пур санра юратмалли?
Сана савса чун юрă хывĕ,
Ман кĕвĕсем - чĕре тулли.

Сăрт хӳттинче çăлкуç юхать-и,
Юрлать-и шăпчăк пахчара -
Сана эп тав тумашкăн хатĕр
Садра вăраннă сăвăра.

Ват рашчасем, çут Атăл хумĕ,
Кăмпаллă йăлăм, улăхсем,
Уçланкăсен чечеклĕ тумĕ -
Ман чунăмшăн чăн-чăн илем.

Укăлчари йăмра пасарĕ,
Пи! кайнă тухăçлă хăмла,
Сар хĕвел çаврăнăш хунарĕ
Ялан çĕклеççĕ кăмăла.

Чăваш çĕр-шывĕ! Тунсăхларăм
Сан паланушăн аякра.
Чăваш пек çывăх çын курмарăм
Пĕччен чух ют патшалăхра.

## ЕШӖЛ ЧӐРӐШ

Ял вӗҫӗнче ӳсетчӗ пӗчӗк чӑрӑш
Ҫинҫе шур хурӑнсен ушкӑнӗнче.
Шыв хӗрринче ҫӑраччӗ ешӗл хӑмӑш,
Эс ман савниччӗ яш кунӗсенче.

Эп сирӗн тӑрӑхра пулса курманччӗ
Чылайранпа - ҫара кайнӑранпа.
Халь таврӑнтӑм та - чун-чӗрем хурланчӗ
Ют ҫын пек шӑппӑн иртнӗ чух ялпа.

Эс симӗс костюмпа вӑйӑа тухаттӑн,
Эп савӑнаттӑм эс илемлипе.
Чуна килентерсе хитрен кулаттӑн,
Ҫӳреттӗмӗр санпа, тен, ҫӗрӗпе.

Сана урӑххисем хаваслантарчӗҫ
Эп хулара вӗреннӗ тапхӑрта.
Мана часах савнисӗрех хӑварчӗҫ,
Качча эс тухрӑн шӑп вун тӑххӑрта.

Ял вӗҫӗнче лутраччӗ ешӗл чӑрӑш,
Халь юрлӑ капанран та ҫӳллӗрех.
Вун тӑххӑрта эс турӑн пысӑк йӑнӑш,
Эп уншӑн кулянатӑп кулленех.

## ПАХЧАРИ ЧИЕСЕМ

Алкумран та ҫӳллӗрех чиесем,
Тӗттӗм хӗрлӗ те кӗрен ҫырлисем.
Савнӑ тус кайнӑранпа уйӑх иртрӗ,
Уншӑн хытӑ тунсӑхларӗ чӗрем.

Асилетӗп эпӗ чун савнине,
Ун тюльпан пек кӗп-кӗрен тутине.
Кӑпӑш хумлӑ сар ҫӳҫне те манаймарӑм,
Сӗлӗрен вӑл илнӗ пуль илемне...

Килсе ҫитрӗ хуларан сар пикем,
Хурлӑхан пек мӑй ҫинчи шӑрҫисем.
Эп туятӑп: пуринчен те илӗртӳллӗ
Унӑн ҫӑлтӑр пек кӑвак куҫӗсем.

Хӗр каларӗ: «Эп текех санӑн мар,
Кун-ҫулсем пӗрлешейменшӗн каҫар.
Качча тухрӑм бизнесмен ачине эп,
Ҫилленмесӗр ал парса уйрӑлар».

Алкумран та ҫӳллӗрех чиесем.
Тӗттӗм хӗрлӗ те кӗрен ҫырлисем.
Савнӑ тус кайнӑранпа уйӑх иртрӗ,
Уншӑн халь те ыратать ман чӗрем.

* * *

Лупашкари шевле,
Каçхи сас-чӳсĕр шуçăм
Хитре... вĕсемпеле
Сана курсассăн куçăм.

Сар кайăк юрлани,
Çăл куç шăратнă сасă
Чипер-ши - чун савни
Сана савмасть пулсассăн?

Салхуллă-çке тĕнче
Савнисĕр, юратусăр!
Паян куç умĕнче -
Асаплă йӳçĕ çумăр...

* * *

Тимлĕ кайăк евĕр вичкĕн
Тинкеретĕн ман çине.
Калаçма аван-çке иккĕн
Урамра чух каçхине.

Сар çӳçна аван куратăп
Кĕмĕл уйăх çиçнĕрен.
Юрататăп, юрататăп
Эп сана чун-чĕререн.

Эс мана ялан илетĕн
Çепĕççĕн ыталаса.
Нихăçан та манмăп тетĕн
Çак тĕле те çак каса.

Юрату мана çĕнетрĕ
Тепĕр хут шанма, савма.
...Çывăхра çăл шĕпĕртетрĕ,
Шавламарĕ хурама.

* * *

Мĕн çӳлтен-çӳлтен анать -
Вăл хăпарнă çĕр çинчен...
Вĕт йĕпхӳ йăсăрланать -
Пăс çĕкленнĕ хирсенчен.

Тӳпене хитрелетет
Шукăль асамат карри -
Атăлтан ахах илет...
Çавăнпа хитре тĕрри.

Ялкăшса выртать мерчен
Урамри çерем çинче -
Сывлăм çуталать иккен
Çут хĕвелĕн шевлинче...

Пĕлĕт пăр тăкать çӳлтен -
Нӳр васканă шыв пулма...
Юр хĕлхем сапать питрен -
Çил хăпарнă алхасма.

Шавласа тăрна карти
Çывхарать Египетран -
Тытăннă кайри-малти
Вĕçевне сенкер Нилран...

Аннă Андриян пичче
Икĕ хут та космосран -
Çитĕннĕ вăл çĕр çинче,
Çулĕ выртнă Шуршăлтан...

Метеор çунса килет,
Сăнă евĕр, аякран...
Вăл кăна çĕр патнелле
Çитнĕ аслă уçлăхран.

## ТЕЛЕЙЛĔ ТАПХĂР

Чиперччĕ эп вун тăххăрта.
Хĕрсем патне нумай çӳрерĕм.
Çав вăхăтра туссем çарта
Асап тӳссе çиетчĕç эрĕм...

Мускав хушсассăн пĕрисем
Парашютпа герой пек сикрĕç,
Танкпа таптарĕç теприсем,
Оккупантсен ятне те илтрĕç.

Вĕсем чехсем çине пеме
Ĕмĕтленсе ӳсмен нихçан та.
Анчах кун-çул вута кĕме
Партарнă Кремльтен команда...

Студентчĕ эпĕ ун чухне.
Çырла пек сăнăм яп-якаччĕ,
Юлташ вăрçа лекессине
Эп тĕлĕкре те шутламанччĕ.

Юлташăмăн цинк тупăкне
Хĕл кунĕ кузовран антарчĕç,
Хĕрес çине ун портретне
Хурланчăклăн лартса хăварчĕç.

Янрарĕ гимн, пачĕç залп.
Ĕсĕклени пуçа хĕстерчĕ.
Вĕри куççуль йăлтăртатни
Раштав юрне те ирĕлтерчĕ.

Ман вилнĕ тусăмăн савни
Клуба кайран тек çӳремерĕ -

Юлташ кун-çулĕ татăлни
Ăна килте ларма хистерĕ.

Ăнлантăм эп вун тăххăрта:
Студент пулни — телейлĕ тапхăр.
Кайран хĕн куртăм эп çарта.
Унта мана та аврĕç саккăр.

## ÇĔРЛЕ

Тӳпе хуранĕ ăçтарах-ши?
Йĕс тыткăчĕ çеç курăнать...
Çӳлте пĕр çăлтăр - хир юлташĕ
Пире тулли курка сунать...

Кăшт палăрать асамлă алтăр
Шур пĕлĕт мамăкĕ çинче...
Шевле васкавлăн йăлтăр-ялтăр
Çиçсе илет ял вĕçĕнче.

Пулать-ши çумăр? Е пулмасть-ши?
Тӳпе хĕрри вĕл-вĕл вылять.
Саралчĕ фермерăн ырашĕ.
Пĕтпĕлтĕк те ăна ырлать...

## ВĂЙĂ ШАЛЧИ

Селĕм вăйă шалчи -
Туй пĕкки пек чипер.
Ун пек çеç-и? Вăл чи
Çӳллĕ çакнă ӳнер...

Тутăрсем - речĕпе -
Хитрелетнĕ ромб пек.
Вĕлкĕшеççĕ çилпе...
Ак ăçта вăл чечек!..

Пит шăлли тĕррисем
Ал çупса явăнни -
Хамăр çакнă илем,
Хамăр вăйă парни.

* * *

Пĕр сăрланман эсĕ - пур пĕр чипер.
Пиллĕ иккен çут çанталăк!
Ыр куçусем пĕлĕтрен те сенкер.
Шурă питӳ - питĕ савăк.

Çепĕç туту - те шевле, те çырла,
Шур шăлусем пĕр виçеллĕ...
Хăмăр çӳçӳ ачашлать кăмăла -
Пас тытнă чух та илемлĕ.

Тӳр янаху калама çук хитре,
Уншăн - ши эс питĕ хаклă?
Тĕп илемӳ сан - сăпайлă чĕре.
Эс кăмăлпа та çунатлă.

# ХАМĂР ЯЛ

Эп ялта чупса çӳренĕ
Хамăр ӳснĕ вăхăтра.
Пысăк мар шкулта вĕреннĕ,
Савăннă укăлчара.

Хамăр ял, чун савнă ял! -
Яланах вăл асăмра.
Ун пек ыр кĕтес сахал,
Канлĕ мар мана ютра.

Пĕчĕкрен эп юрататăп
Çырмари йăмрасене,
Çавăнпа, тен, кăмăллатăп
Манайми Чăваш Ене.

Лапамри çăл куç юмахĕ
Маншăн юрă пек паха.
Асамат пĕрчин ахахĕ
Мантармасть ачалăха.

## КĂМПАСЕНЕ КУРСАН

Шурураллă сар кăмпа эртелĕ
Балетри хĕрсем пекех хитре.
Пур кăмпи те пĕрмече кĕпеллĕ...
Эп «Жизель» куратăп ĕмĕтре.

...Савнипе залра пăхса ларатăп
Балеринăсем ташланине...
Андерссен юмахçă пек сăнатăп
Вăрманта асам пуçланнине...

* * *

Çумăр арфа пек тăнă чухне,
Сар хĕвел йăл кулсан ирхине,
Шăпчăкпа савăнсан вĕрене -
Аса ил эсĕ чун савнине.

Çăлтăрсем курăка йĕпетсен,
Шурăмпуç питӳ пек хĕрелсен,
Куçусем пек çиçсессĕн сирень -
Юрлăп эпĕ, савни, сан çинчен.

Шур хĕмпе витĕнсессĕн урам,
Тунсăха парăнсассăн ытам,
Чĕрӳнте урăх çук тек никам,
Ман патна, тусăм, яр эс салам!

Эпĕ сисĕп вара хурлăхна,
Шăппăн уçăп килти альбомна,
Чылайччен пăхса ларăп сăнна,
Вара калăп: «Ман эсĕ кăна!»

* * *

Тĕп рольсене те эс вылярăн
Яш-кĕрĕмĕн театрĕнче.
Сенкер экран кăтартрĕ санăн
Маттурлăхна хваттерсенче...

Эс çепĕçлĕх чĕртсе ӳстертĕн
Спектакльсен сассисенче...
Пире çунтартăн, килентертĕн
Сар пикесен ролĕсенче.

Нарспи сăнне илсе çуралнă
Эс, тусăм, аякри ялта.
Аçу-аннӳ сана пил панă
Качча кайма вун тăххăрта.

Çав вăхăтра эпир туссемччĕ,
Студенткăччĕ эс ун чухне.
Эп санăн романна пĕлменччĕ,
Эс кайрăн... сцена ăстине...

Вăй Сетнертен те, тен, хитреччĕ,
Анчах юратрĕ «çуттине»...
Вăл санăн телее пĕтерчĕ,
Пĕччен ӳстертĕн пепкӳне.

Сана эп халь те хисеплетĕп.
Ман асăмран эс çухалман.
Сана тулли телей пиллетĕп.
Эп сивĕнмен театртан...

* * *

Сана манатăп та каллех аса илетĕп.
Каллех килетĕн манăн пурнăçа.
Хăш-пĕр чухне çумăнтанах иртетĕп,
Вара йăлт çухататăп канăçа.

Кĕлеткӳпе киленĕччĕ ӳнерçĕ,
Кинопродюсер асăрхĕ сăнна...
Сан хурлăхан пек куçусем çиçеççĕ
Çурхи сад пек пăлхантарса мана.

Вара çывăраймастăп сĕм çĕрле те,
Шухăшăмра тухатăн та умма,
Эп сан сăпайлăхна аса илетĕп,
Вăл питĕ килĕшет ман чунăма.

Сăпайлă эсĕ. Кăмăллă та ăслă.
Мĕнле асамлăх санăн чĕрӳнте?
Ман пурнăça нумай хитре хĕр пăснă,
Халь эс çунатлантартăн ĕмĕте.

* * *

Таса кăвак куçусене
Аса илетĕп эп ялан.
Эп манаймастăп вĕсене.
Ку, тен, сана юратнăран.

Садра çиçсе ларать чечек,
Вăл куçусем пекех кăвак.
Мана курсан ан пăрăн тек,
Умма пырса калаç пăртак.

Эп сан кăвак куçусенче
Куратăп ырлăх пуррине.

Епле илемлӗ ҫут тӗнче
Чуна кӗрсессӗн ҫуркунне!

* * *

Шуҫӑм пек хитрелетрӗн
Эсӗ ман пурнӑҫа.
Шанӑҫпа ҫирӗплетрӗн
Чӗремри канӑҫа...

Юрататӑп сана,
Хисеплетӗп сана,
Чунӑмра эс кӑна,
Тыткӑнларӑн мана.

Ҫӑлтӑрпах вӑранатӑп
Эпӗ халь савӑнса.
Сан ҫинчен шухӑшлатӑп
Кун-ҫула тав туса.

Хӗпӗртетӗп: эс манӑн.
Савнисем халь эпир.
Чӗремрех пурӑнатӑн.
Ҫавӑнпа ырӑ ир.

* * *

Ӑвӑс папкисем вӑраннӑ,
Ҫуркунне шӑрши килет...
Пӗр хӗре эп асӑрханӑ,
Чун кӑрт-карт сиксе илет.

Йышлӑн усӑнса тӑраҫҫӗ
Сив хӗҫсем пӳрт ҫумӗнчен...
Кунӗпех манма памаҫҫӗ
Шухӑшсем савни ҫинчен.

Автансем ăшша туяççĕ,
Карнизран юхать тумла.
Кĕскелсех пырать хĕл каçĕ,
Манăн халь мĕн тумалла?

## ПАЛЛАЙМАРĂМ

Ку вырăнта нумай эп хашш! сывланă,
Ем-ешĕл халь те аякри сăртсем.
Çак таврана ман çамрăклăх саланнă,
Асрах - чĕрем кĕрленĕ вăхăтсем.

Эп миçе çул савни сăнне курасшăн
Çӳрерĕм çакăнти çул-йĕрсемпе.
Паян тӳсĕмлĕхе эп тав тăвасшăн.
Тек хăратмасть мана хура тӳпе...

Ку тăрăхра пĕр йывăç та, пĕр чул та
Юлмарĕ пуль пĕлмесĕр тертĕме.
Çапах савни сăнарĕ юлчĕ çутă,
Хĕн-хур сивĕтеймерĕ чĕреме.

Астăвăмра вăл халĕ те хĕр евĕр -
Хитре сăн-питлĕскер, вун тăххăрта.
Ял пуçĕнче сĕрлетчĕ хĕрлĕ клевер,
Телей сиксе ташлатчĕ кăкăрта.

Нумай çултан савниçĕме тĕл пултăм,
Анчах та паллайман -мĕн эп ăна...
Ун умĕнчех калаçнă майăн юлтăм.
Шеллетĕп халь - çыртаймăн чавсана.

* * *

Епле юсав та килĕшӳллĕ
Эс килнĕ тумланса паян.
Балет пики пек селĕм пӳллĕ
Мĕнле эс юлнă çак таран?

Пăхатăп та ытараймастăп
Кĕлеткӳне, сăнна, тумна.
Нимле сăмах та тупаймастăп
Эп халĕ çавăрма сана.

Эс хитререн эп вăтанатăп.
Ах, селĕм-çке çак илемӳ!
Эппин сана эп юрататăп,
Чунра хаваслăх, çĕкленӳ!

Куçусенчи кăвак фиалка
Мана чĕнет, савăнтарать.
Эп шыракан телей, тен, çакă?
Ыр шанчăк хавхалантарать.

Пире хăюллăхăм, тен, парĕ
Вăтанăва сирсе яма.
Эп мар-и сан тусу,эп мар-и?
Кил, чун савниçĕм, ытама!

Ч-42255
НАЦИОНАЛЬНАЯ
БИБЛИОТЕКА
ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ

## ЁМĔТ

Эп макăрма ĕмĕтленетĕп
Куçа хупса, куççуль çăтса.
Çав кун çитессине кĕтетĕп
Ыйха сирсе, куллен утса.

Эп макăрăттăм чарăнмасăр
Самант çеç мар - ик-виç минут.
Юлташсенчен те вăтанмасăр,
Тавах тесе темиçе хут!

Эп йĕрĕттĕм хаваслăн, шăппăн,
Пите тытса, ĕсĕклесе.
Кайран, тен, калăттăмччĕ лăпкăн,
Туссем, ан тĕлĕнĕр тесе.

Эп макăрăттăмччĕ телейлĕн
Ахах-мерчен куççуль çутса...
Ман патăма ачаш хĕвеллĕн
Савни таврăннине курса.

Халь хурлăхлăн ĕçе çӳретĕп,
Выртатăп çĕрĕпе çунса.
Эп куляну сĕтне ĕçетĕп
Савни кайнишĕн уйрăлса.

Чĕремшĕн вăл - тăвар та, пыл та,
Хĕвел те, çутă çăлтăр та.
Хитре чечек те, сиплĕ шыв та -
Ялан пĕрремĕш вырăнта.

## ЮРАТĂВĂМ

Вун çиччĕри юратăвăм,
Вун тăххăрти çухатăвăм,
Çур ĕмĕрхи ыратăвăм,
Çунтартăн эс мана!

Ват хурама та хуçăлчĕ,
Тăван урам та улшăнчĕ,
Шур çӳç пĕрчи те хушăнчĕ -
Манмарăм эп сана.

* * *

Сăпайлăх туйăмĕ санра, паллах, нумай.
Ăс енĕпе те сан йăлтах виçеллĕ.
Типтерлĕхӳ те санăн - пĕр сакай...
Сăну-питӳ те кăмăллă, илемлĕ.

Анчах санра та тĕксĕм пăнчă пур:
Чăн туйăмна шала эс пытаратăн.
Ултавупа пуласшăн та маттур,
Анчах серекене ху çакланатăн.

Эс çынсене сиен тăвасшăн мар.
Вĕсен аташăвне те каçаратăн.
Ху çавăн чух активнĕ пек тăвар
Суйма тивнишĕн хытă пăлханатăн.

Эппин сан, тусăм, ĕмĕтӳ таса -
Ултав киммипеле ларса пымастăн.
Сана эп пурăнатăп ыр сунса,
Пылак ыйха путсассăн та манмастăп.

## ХĔЛ МУЧИ - ЎНЕРÇĔ

Хĕл пек ўнерçĕ пулаймарăм.
Ун ĕçĕсем епле чипер:
Кантăксене вăл ярăм-ярăм
Эрешлĕ тунă, маттурскер.

Мучин романтикăллă стилĕ
Юмахсене асилтерет.
Асамçă пек вăл ăшă пиллĕ -
Укçа илмесĕр парнелет.

Пăхатăп, акă: пысăк рама
Çурт балконне илемлетет.
Пĕр ушкăн хурăн, çўллĕ пальма
Кварц çинчилле хĕлхемленет.

Сылтăмарах - садри культура,
Пилеш пуль - йышлă çырлисем.
Чўречесем çинчи гравюра -
Ытарайми чăн-чăн илем.

* * *

Эс мана шырарăн - тупаймарăн.
Çураймарĕ ăнăçу çеçке...
Хурлăхăм кўллийĕ пулчĕ тарăн.
Эп сана çунас пек кĕтрĕм-çке.

Мĕн тери пылакчĕ манăн ĕмĕт.
Мĕн тери хитреччĕ пуласси!
Ырлăха хупларĕ тĕксĕм пĕлĕт,
Кăлăх пулчĕ-çке хапха сасси.

Эс мана çулла тĕл пулаймарăн,
Кураймарăн эс мана хĕлле.

Çуркунне те, тен, мана шырарӑн.
Кӗркунне те килтӗн ман киле.

Шел, ун чух эп хулара çӳрерӗм,
Темшӗн кайрӗ пирӗнтен телей.
Сансӑр эп пӗр кунта ирттермерӗм...
Уншӑн эс кала мана: о кей!

## ВУН САККӐРТА

Студент чухне, вун саккӑрта,
Гитарӑпа эп туслӑччӗ.
Вӑй-хал вӗретчӗ кӑкӑрта,
Кӗсьем, тен, çирӗм пуслӑччӗ...

Анчах эп юрату мӗнне
Тӑван шкултах ӑнланнӑччӗ.
Куç хывнӑччӗ ют ял хӗрне,
Чӗрем те çулӑмланнӑччӗ.

Çулла института кӗрсен
Студенткӑпа паллашрӑмӑр.
Унпа хавaслӑн каççерен
Чуна уçса калаçрӑмӑр.

Гитарӑпа коридорта
Хӗрпе ялан тӑраттӑм эп.
Вӗри чӗрем - вун саккӑрта,
Музыкӑпа пурнаттӑм эп.

Хитре хӗрсем йӗри-тавра
Пӑхатчӗç те ӑмсаннӑ пек
Хавaслӑччӗ ман чунӑмра.
Телейлӗччӗ эп савнипе.

Анчах ман хĕр профессора
Хĕлле укçашăн сутăнчĕ.
Эрне эп макăртăм вара.
Телей керменĕ хупăнчĕ...

Хурланчăклăн гитарăпа
Пĕрмай каларăм музыка.
Çаклатрăм «иккĕ» «французпа»...
Хĕн-хурăм пулчĕ пысăккă.

Çулла çитсен, çырла пиçсен
Тĕл пултăм эп ют ял хĕрне.
Мана пике савать иккен.
Ăна эп сĕнтĕм чĕрене.

Халь эп каçпа гитарăпа
Тухатăп кӳлĕ хĕррине,
Çӳретĕп çĕнĕ тусăмпа,
Киле кĕретĕп ир енне.

* * *

Йĕпе юр пĕрчисем
Чӳречене лексе
Йĕреççĕ те йĕреççĕ.
Çӳлтен сив çăлтăрсем
Салхулăха сирсе
Сикеççĕ те сикеççĕ...

Чăн çăлтăрсем таçта.
Тӳпе каррийĕ тĕттĕм.
Савниçĕм, эс ăçта?
Сана нумай эп кĕтрĕм.

Куççульлĕ кантăксем.
Хурав памасть тавралăх,

Аран ёҫлет чӗрем,
Тапать пӑхса тӑмалӑх.

Килсем эс, чун савни.
Мана эс ҫук чух япӑх.
Эп санӑн тур ҫырни -
Ютти ҫине эс ан пӑх.

Йӗпе юр пӗрчисем
Вӗҫеҫҫӗ те вӗҫеҫҫӗ.
Ятна калать чӗлхем.
Алсем хӗлхемленеҫҫӗ.

Мана сан сар ҫӳҫӳ
Хӗвеллӗн курӑнать те,
Хитре кӑвак куҫу
Ӑшне путма эп хатӗр.

Эп санӑн сассуна
Романс пек юрататӑп.
Ҫӑп-ҫӑмӑл уттуна
Курса хавхаланатӑп.

Эс манӑн ӗмӗтсен
Ҫут уйӑхлӑ ҫӑл куҫӗ.
Кичем мана пӗччен,
Килсемччӗ, алӑк уҫӑ...

Чипер сӑнна курсан
Тӳрех ҫунатланатӑп.
Асамлӑх пур пуль сан!
Эс пур чух эп пурӑнатӑп.

## ПĔЧĔК ПЎРНЕСЕМ

Сан пĕчĕк пӳрнӳсем асамлăх çуратаççĕ.
Ман вĕсене хуллен, хуллен тытас килет.
Çемçе аллу çине çынсем куллен пăхаççĕ.
Тасалăхĕпе вăл чуна килентерет.

Эс шурă халатпа хĕл хĕрĕ пек çӳретĕн!
Çынран илетĕн юн, ĕçлетĕн штативпа...
Аван сан кăмăлу, аннӳ те хĕпĕртет, тен,
Çынсемшĕн тăрăшма эс тунă вĕт тупа.

Эс ху та пысăк мар,
Пĕвӳ çинче те çăмăл.
Сенкер шевлеллĕ пек кăшт хăмăр куçусем.
Сана курнипеле лайăхланать ман кăмăл,
Кăтра кĕске çӳçӳ майна кӳрет илем.

Каллех эп çинçешке пӳрнӳсене сăнатăп.
Кăштах хĕретнĕ эс кĕске чĕрнӳсене.
Эс ман умра чухне эп тăтăш савăнатăп,
Салхулланать чĕрем эс аякра чухне.

## ÇИРĔМ ВИÇÇĔРЕ

Утать хитре хĕрарăм ман енне.
Чĕркуççисем илемлĕн хуçланаççĕ.
Тӳп-тӳрĕ тытнă йăрăс пилĕкне,
Çӳç пĕрчисем ачашшăн вылянаççĕ.

Хĕрарăмăн хăп-хăмăр куçĕсем,
Вут-çулăм ӳкнĕ пек кĕрен сăн-пичĕ.
Тăлт-тăлт тапать вăл килнĕ чух чĕрем,
Амур сăнни ман ӳтĕме те тирчĕ.

Йӑл куллине телейлӗн пытарса
Ман паталла утать хитре хӗрарӑм.
Çурхи самант, тен, ларчӗ чарӑнса,
Килекене пӑхса ытараймарӑм.

Мана вӑл курнӑ! Эп ун чунӗнче!
Мана сума савать хитре хӗрарӑм.
Юрла эппин, юрла, çурхи тӗнче,
Çак хаклӑ çын - ман тусӑм, манӑн арӑм.

* * *

Шуралчӗ пӗлӗт,
Хӗвел - арбуз!..
Вӑранчӗ çӗмӗрт,
Ал сулчӗ тус.

Çуталчӗ сывлӑм,
Янрарӗ сад.
Хӗмленчӗ сывлӑш,
Асра - пӗр ят.

Ӑна калатӑп
Хӗрӳлленсе.
Хӗре саватӑп
Савни тесе.

Тӑрать-ха уйӑх
Çӳлте-çӳлте.
Ман çук халь хуйӑх.
Савни килте.

Унпа çӳрерӗм
Паян ирччен.
Ӑна итлерӗм
Килениччен.

Ачаш та çепĕç
Савни сасси.
Эппин çитет кĕç
Авланасси.

* * *

Кăн-кăвак илемлĕ куçлă
Хăмăр çÿçлĕ çамрăк хĕр.
Тап-таса кĕске çи-пуçлă -
Модăпа пит туслă - тĕр.

Урисем хитре те тÿрĕ,
Кăшт кĕрен хитре тути.
Юр тĕслех кофтин гипюрĕ.
Çăмăл, сисĕмлĕ утти.

Эп хĕре ытараймасăр
Тинкеретĕп айккинчен.
Çамрăкскер, пулам-ха харсăр.
Çавăрам ăна ирччен.

Кăн-кăвак,
Кăн-кăвак
Хĕрĕн куçĕсем.
Пит пылак,
Пит пылак
Унăн тутисем!

* * *

Хăйăр, Атăл, йăмрасем...
Чăваш ен çыранĕ.
Пăлханса тапать чĕрем.
Кĕт, юман вăрманĕ. -

Сан патне çитес килет.
Эс - юратнă вырăн.
Ăшăм çӳçенсе илет
Сăрт умра чух ыррăн.

Хăпарсан тăвайккине
Ял пуçне çитетĕп.
Киленсе чечексемпе
Рашчана итлетĕп...

Вăтанатăп тек кайма...
Уй хапхи яр уçă...
Кансĕрлет ăшри çырма...
Шиклĕ мăшăр куçăм.

Пурăнать Хăвакасра
Хаклă ăш çунтармăш.
Ун сасси ялан асра.
Хăй - çурхи шур ландыш.

Вăл мана савманнине
Малтанах ăнлантăм...
Утрăм Энĕш хĕррине,
Çĕнĕрен хурлантăм.

* * *

Ун питĕнче эп сивĕлĕх шырарăм -
Пĕлесшĕнчче мана савманнине.
Хĕр сăнĕнче тиркевлĕх кураймарăм,
Эп асăрхарăм вăл хаваслине.

Чăнах-ши хĕр чунне сăнарăм кĕнĕ?
Нивушлĕ вăл мана кăшт юратать?
Ман чĕремре халь пĕтĕм туйăм çĕнĕ,
Юн пусăмĕ çăл куçĕ пек тапать.

Çÿçне те хĕр эрешлĕн тирпейленĕ,
Куç харшине те сĕрнĕ сăрăпа...
Çĕн кофтăпа татах вăл чиперленнĕ,
Пăхать мана темле ырăлăхпа.

Эп савăнăçлă. Пур пĕр çук ман канăç.
Кама пике тус вырăнне хурать?
Сăнарăм та, паян ман ÿсрĕ шанăç,
Эппин манра хĕр каччине курать.

## ТЕАТРТА

Савнипе балкон çинче ларатпăр,
Юхрĕ кĕвĕ. Уçăлчĕ чаршав.
Драма кăтартать паян театр.
Манăн чĕрере çапах уяв.

Сцена çутинче - шап-шурă çĕмĕрт.
Çамрăк мăшăр пычĕ ун умне.
Шурă çĕмĕрт - манăн пысăк ĕмĕт,
Шурă çĕмĕрт - ырă çуркунне.

Ах, сцена, сцена -
Хитре арена.
Çумра ман Гена -
Юратнă тус.
Ах, сцена, сцена -
Йĕрет Елена,
Улать сирена,
Кулать француз.

Шавласа спектакль аталанчĕ,
Сикрĕ кулă, тăкăнчĕ куççуль.
Тĕп геройшăн манăн чун хурланчĕ,
Актерта хама эп куртăм пуль.

## ГИТАРĂПА

Хитре хĕрпе гитарăпа
Коридорта тăраттăмччĕ.
Вара хумханнă сасăпа
Эп ерипен юрлаттăмччĕ.

Чипер янратчĕç хĕлĕхсем,
Хĕр куçĕсем хаваслăччĕ,
Юратăва туйса чĕрем
Хĕрӳллĕрех тапас пекчĕ.

Анчах манран яштакарах
Савнин çĕн каччă тупăнчĕ,
Хĕр улшăнчĕ вара пачах.
Телей чечекĕ хуçăлчĕ,

Пĕрлешрĕ туй туса савни.
Алри гитара макăрчĕ.

Анчах çитсессĕн Çăварни
Çĕн măшăр çипĕ татăлчĕ...

Эп лартнă ăвăс вaтăлсан
Савнипеле тĕл пултăмăр.
Вăл: «Эп сана нихçан манман», -
Тесессĕн йӳççĕн култăмăр.

...Пĕччен ирттернĕ пурнăçне
Яш чухнехи юратăвăм...
Шеллевлĕн пăхрăм ун çине.
Иртмен иккен ыратăвăм...

* * *

Шап-шурă юр хăрпăкĕсем
Пралук çинчен ӳкеççĕ.
Пас тытнă ватă йăмрасем
Илемлĕн чӳхенеççĕ.

Çил е тухать, е çухалать -
Тĕлĕнмелле çанталăк! -
Хĕвел пăхать е пытанать,
Йăлтăртатать тавралăх.

Таса хирти пĕччен юман
Сунарçă евĕр шурă...
Шап-шурă аякри вăрман,
Сахал унта халь юрă.

Çапах хăюллă кăсăя
Хăйне аса илтерчĕ -
Улăм купи патне уя
Юрла-юрла вĕçтерчĕ.

Фантазиллӗ тавралӑхра
Эп саванса тӑратӑп.
Ялти шап-шурӑ шӑплӑхра
Хӗл сӑввине ҫыратӑп.

## КИВ ҪӖН ҪУЛТА

Паян теттеллӗ чӑрӑша
Сӳтетӗп эп. Ҫӗн ҫул васкавлӑ.
Мана ан тыттӑрччӗ нуша,
Малашлӑх пултӑрччӗ уявлӑ.

Хӗллен ҫветкиллӗ уйӑхне
Ҫӗн шанчӑкпа эп утӑмларӑм.
Тусӑмсене, тӑвансене
Телей курма сунса ташларӑм.

Халь йӑлтӑркка эрешсене
Ҫӗн раштавччен эп пуҫтаратӑп.
Упранччӑр лӑпкӑн малашне,
Ӗҫ-хӗл нумай. Ӗҫе васкатӑп.

## ЧИ КИРЛИ

Хура халӑх хушшинче
Сар пике те сахал мар.
Илеме курать тӗнче,
Илемре те - пархатар.

Пурпӗр пурлӑх та укҫа
Ҫӗр ачишӗн чи кирли.
Илем мар чӑн-чӑн хуҫа -
Ҫӑкӑр, хӑпарту чӗлли...

# ТӐВАН УРАМ

Куҫ умӗнче - тӑван урам.
Ун сывлӑшне куллен сывлатӑп.
Салам ӑна манран, салам,
Ӑна эп питӗ юрататӑп.

Унта вылярӑм эп нумай
Ялта хаваслӑн ӳснӗ ҫемӗн.
Ялан асра чечеклӗ май,
Эп ун чухне - Сергей Есенин...

Тӑван урам йывӑҫӗсем
Мана пуҫӗсене таяҫҫӗ.
Е шухӑшлӑ ҫын пек вӗсем
Пӗр хускалмасӑр шӑп лараҫҫӗ.

Тӑван урам шӑплӑхӗнче
Эп каҫсерен шутлаттӑм ҫӑлтӑр.
Хӗвел тухсан ҫерем ҫинче
Ҫиҫетчӗ сывлӑм йӑлтӑр-йӑлтӑр.

Тӑван урам сукмакӗпе
Эп ир-ирех шкула васкаттӑм.
Хир хӗрелсен, юлташсемпе
Хӗрсем патне клуба утаттӑм.

Мана ӑсатрӗҫ салтака
Ҫӑка ҫулҫин кавирӗ тӑрӑх.
Урамӑм юлчӗ аякка,
Тӑван урамсӑр чунӑм тӑлӑх.

Хушса юрламалли:

Тăван урам — тăван тавралăх.
Чунра вăл юлчĕ асăнмалăх.
Тăван урам — тăван йăмралăх.
Унта ман килĕм — савăнмалăх.

## УЙĂХЛĂ КАÇ

Килте ларсан çăлтăрсене кураймăн,
Ир çывăрсан саваймăн уйăха.
Савниçĕм пурăнать ытла сăпайлăн,
Килĕштерет вăл тутлă ыйăха.

Тен, вăл мана илемлĕ каччă мар тет.
Тен, çавăнпа тултан ирех кĕрет.
Каллех çӳле шыв алтăрĕ хăпарчĕ...
Йалтăртатса пире илем кӳрет.

Çумра юратнă çыннăм çук та, ĕмĕт
Вĕçсе каять Хур кайăк проспектне...
Тӳпе кăвак. Пĕртен-пĕр шурă пĕлĕт
Пырса витет тӳпен сар чечекне.

* * *

Вĕл-вĕл чечек, кĕрен чечек
Вĕлле хуртне илентерет.
Шур улмуççи çерем çинче,
Атте садне килентерет.

## ПАС ТЫТНĂ КУН

Шур хурăнсем, ем-ешĕл чăрăшсем
Хĕлхемлĕ юр мамăкĕпе пĕркеннĕ.
Пас айĕнче - вăрман, садсем, çуртсем,
Пралуксене те Хĕл мучи чĕркенĕ...

Паян урам темле асамлăхра.
Йĕри-тавра - шăп-шăпăрт та шап-шурă.
Хапха уçсан хаваслă шăплăхра
Пас тăканни - фантази, сассăр юрă...

Çак вăхăтра савни каять ĕçрен,
Ун куç харши те, çӳçĕ те пасарнă.
Вăл хитререх мĕн пур Юр пикерен,
Ăна утма хĕл кăпăш мамăк сарнă.

Илтетĕп эпĕ: юр чĕриклетет,
Хĕр аттисем сивве ашса пыраççĕ.
Ман ăшăмра, тен, сăвă ирĕлет,
Шур тумлă йывăççсем юмах калаççĕ...

## ÇАТАН КАРТА

Çăтăр-çатăр çатрашка.
Çитмĕл пилĕк кукрашка -
Ку, паллах, çатан карта,
Вăл та пур хăш-пĕр ялта.

Тăкăрлăк варрипеле
Эп утатăп килелле.
Ик енче - çатан карта,
Шур чие сĕрлет шалта...

Паянхи ял сăнĕнче
Ĕлĕкхи те шутсăр мар.
Авăтать çатан çинче
Чăх хреснашшĕ шар та шар!

## ТУХЬЯ

Шĕлтĕр-шĕлтĕр шĕлтĕрми
Килĕшет хĕр пуçĕнче.
Шухă вăйă, туй çемми
Упранать тухья çинче.

Манăçми Нарспи ăна
Тăхăннă вăййа кайма.
Кĕмĕл тенкĕ тухьяна
Сум кĕртет шăнкăртатма.

Паттăр вырăс шлемĕ пек
Вăл кăшт шĕвĕр, йăлтăркка.
Унăн çут илемĕпе
Хитререх линкка-линкка.

Хутшăнма чăн-чăн туя
Тăхăнăр, хĕрсем, тухья.
Çакăр шăрçасем мăя,
Васкăр ташлама вăййа.

# ТĂВАН КИЛ-ÇУРТ

Тăван кил-çурт, тăван пахча
Нихçан-нихçан асран тухмаççĕ.
Пÿрт çумĕнче - сарай, мунча.
Улмуççисем шап-шур лараççĕ.

Сĕрлеççĕ туратсем çинче
Пыл хурчĕсем, тÿпе - хĕвеллĕ.
Пахчан çурхи музыкинче
Хаваслăх, ырлăх, кун мехелĕ.

Пĕлетĕп эп ачаранпах
Тăван пахчан пур лакăмне те.
Киле килсессĕн яланах
Эп пахчана тухса ĕçлетĕп.

Хăмла çырлин тĕмми ăшне
Чепчен йăва туса пытаннă.
Юрлать вăл халĕ юррине,
Ун сассине ялан эп савнă.

Тăван кил-çурт шăплăхĕнче
Ачалăх тĕлĕк пек çухалчĕ.
Паян хула хваттерĕнче
Мана çитмест ял асамачĕ...

# ЭНĔШ ÇУМĔНЧИ ЯЛТА

Укăлча умĕнчи вăкăр евĕр
Мĕкĕрет Йăлăмра пăрахут...
Çыранри ял çумне акнă клевер.
Ун çинче савăнать хăмăр ут...

Ку ялта ман савни пурăнатчĕ.
Халь ăçта-ши вăл? Хăш хулара?
Эп çарта чух вăл тупнă та каччă
Тухса вĕçнĕ унпа кăнтăра.

Çак паллан ă яла тепĕр хут эп
Килтĕм пулă тытма кайнă май.
Тукасран Анаткас тăрăх утăп,
Пуçăмра асилӳ пит нумай.

Эп çап-çамрăк, хаваслă, чиперччĕ,
Хĕр татах хитререхчĕ-и, тен...
Чĕрере юрату вĕлкĕшетчĕ,
Тĕл пулаттăм хĕрпе каçсерен.

Çул çинчен курăнать Аслă Атăл,
Энĕш шывĕ те çутнă шевле...
Эп вĕсен шуçăмне ас тăватăп...
Шел, хĕрпе тек çӳреймĕп пĕрле.

## ÇУТĂ КАÇ

Верандăра та çутă,
Тӳпе те ялкăшать.
Унта çĕн уйăх пур та,
Яла çиçме хушать.

Тавралăх лăпкă, ешĕл,
Чечек шăрши садра.
Савни мана кĕтет-ши?
Ялан вăл асăмра.

Тасатнă пăр пек уйăх -
Хаваслă та хитре.
Çут çăлтăр Ака туйĕ
Пуçланнă пĕлĕтре.

Çĕн уйăх илĕртӳллĕ -
Чĕнет çӳле пăхма.
Савни хитре ӳт-пӳллĕ,
Вырнаçрĕ чунăма.

## КАНĂÇСĂР ВĂХĂТ

Сехет çинчен паян та куç каймарĕ:
Хĕвел анмасть, çаплах тăрать çӳлте...
Çынсен сăмахĕ чăн та тĕрĕс мар-и: -
Телейлисем пăхмаççĕ сехете.

Ман ăш вăркать.
Шăвать вăраххăн вăхăт.
Савни килмест. Килес те çук паян.
Шывра çаплах ишет хĕлхемлĕ чăкăт...
Хĕвел сăнарĕ çухалмасть çăлтан.

Эп сехете чирленӗ пек сӑнатӑп.
Ман чӑтӑм ҫук, каҫ пултӑрччӗ часрах.
Эп пӗр хӗре вилес пек юрататӑп,
Ӑна клубра курасчӗ хӑвӑртрах.

Ӗнер мана вӑл юратмастӑп терӗ.
Эп пӗлеймерӗм ҫакӑн сӑлтавне.
Унччен манпа вӑл кӑмӑллӑн ҫӳрерӗ,
Халь темшӗн сӑнӑ лартрӗ чӗрене.

Ман ҫав сӑнна мӗнле кӑлармалла-ши?
Ҫухалчӗ ыйхӑ. Ыратать суран...
Ҫӳлте ҫурла - ҫут ҫӑлтӑрсен юлташӗ -
Йӑлтӑртатма пуҫларӗ аякран...

## САНСӐР

Сансӑр эп - чӗмсӗр юрӑ,
Сансӑр эп - нӳрсӗр курӑк,
Эс пулсан эп хаваслӑ,
Шӑпӑрт мар, уҫӑ саслӑ.

Эс ҫук чух пыл та йӳҫӗ,
Манран кулӗ кӗтӳҫӗ,
Эс пулсан ӳкмӗ ҫӳҫӗм,
Эп маттур - ҫӗнтерӳҫӗ.

Эп сана юрататӑп,
Ӗмӗтпе пурӑнатӑп.
Пул ҫаплах эс тирпейлӗ,
Ырӑ чунлӑ, телейлӗ,

Эс - манӑн пурнӑҫ,
Эс - ман хӗвелӗм.

Эс - манăн юмăç,
Эс ман телейĕм.

* * *

Ку ялта — хăва шăрши ...
Ку ялта — сăпка аваççĕ.
Миçе вăрттăн пулăç-ши?
Ирсерен çăрттан сутаççĕ...

Тĕл пулаççĕ кимĕсем -
Урамрах вĕсем выртаççĕ.
Ку ялти итлеменсем
Атăлта телей шыраççĕ.

Ку ялта çынсем хастар,
Ку ялта çынсем укçаллă.
Кам ĕçлет, çав чухăн мар.
Çирĕп кăмăллă. Ку паллă.

Эпĕ те хăва касса
Карçинкка туса сутам-и?
Çитрĕм те Анаткаса,
Ăмсантарчĕ ял урамĕ.

## КАЙĂКСЕМ

Кайăксемшĕн чикĕ çук.
Кайăксем илмеççĕ виза.
Турцие вĕçет куккук.
Ăмсанать ăна Луиза...

Кайăка кăна çӳлтен
Курăнать вăрман урли те.
Вăл каçать ют çĕрсенчен,
Вăл Австралие те çитĕ.

Кайӑксем юта кайсан
Ӗрчемеҫҫӗ, юрламаҫҫӗ.
Ҫакӑнпа вӗсем ҫынран
Ҫӑлтӑр пек инҫе тӑраҫҫӗ.

Пурпӗр ырӑ чепчене
Эпӗ тӑтӑш ӑмсанатӑп.
Вӑл пӗлмест Раҫҫей хӗлне,
Пурпӗрех ӑна саватӑп.

Хурламастӑп эп ӑна
Ман пек йывӑрлӑх курманшӑн.
Нарӑсра та тӑмана
Хӑрамасть сив ҫил-тӑманшӑн.

Тӑмана та кайӑках,
Кӑнтӑра вӗҫсе каймасть вӑл.
Пултӑр! Эп ӑна ҫапах
Нихӑҫан та пуҫ таймастӑп.

## ХӖЛЛЕХИ КАҪ

Ҫутӑ уйӑх сарӑ ункӑра,
Садсене пытаннӑ кӑнтӑр ҫилӗ.
Ӑшӑ та шап-шурӑ таврара,
Шӑшие те асӑрхайӗ тилӗ.

Уй-хирте - асамлӑ сарӑ каҫ,
Сукмака сив кӗрт кӑштах хупланӑ.
Капӑр уйӑх - ылтӑн кӑлтӑрмаҫ,
Уншӑн сахал мар эп тунсӑхланӑ.

Килес ҫук паян яла савни,
Шӑплӑх ун ятне аса илтерчӗ.

Эп пĕлетĕп: вăл хула хăни,
Ман чуна нумай вĕчĕрхентерчĕ.

Эп çӳретĕп ял урамĕпе.
Чунăм савнине куç пек кĕтетĕп.
Кăлтăрмаç пек уйăхлă тӳпе,
Кулянатăп-и? Çук, киленетĕп!

## АШШĔ-АМĂШ КИЛĔ

Хĕршĕн ашшĕ-амăш килĕ
Вăхăтлăх йăва кăна.
Чĕринче ун туй пехилĕ,
Çырăнсассăн хĕр - хăна...

Кин кĕртсессĕн ашшĕ-амăш,
Хĕрĕ ютшăнма пуçлать,
Ӳснĕ читлĕх ăш çунтармăш
Еверлĕ пулса юлать.

Хĕрĕ вăхăт иртнĕçемĕн
Сивĕнет тăван килтен.
Кинĕ вырнаçать тирпейлĕн
Çĕнĕ кил-çурта хуллен.

Ывăл çитĕннĕ кил-çуртшăн
Вăхăтлăх сар кайăк мар.
Вăл илтет: «Килтен ан ютшăн,
Эс ялтах ярсам тымар»...

Риснĕ кайăк евĕр сулхăн
Хĕр чĕри кин сивĕ чух...
Ашшĕ-амăш килĕ уншăн -
Ют йăва, çара чуччу.

Хăнана килет вăл шăппăн
Манăçми тăван киле.
Хурланса сывлать те вăрттăн
Утăмлать тĕпелелле.

* * *

Вăтанатăн эс манран,
Эп те именетĕп-çке.
Сăн-питӳ, мана курсан -
Чеп-черчен кĕрен çеçке.

Пурпĕр манăн сан патна
Яланах пырас килет.
Эс те - уяври хăна,
Кăмăлу çакна пĕлет.

Аллусем чĕтренине
Сисрĕç манăн пӳрнесем.
Куçусем ялкăшнине
Хăвăрт туйрĕ чун-чĕрем.

Иксĕмĕр те савăнса
Калаçатпăр тĕл пулсан.
Чăлханатпăр пăлханса,
Пăхма çук ун чух куçран.

Тутусем йăл кулнипе
Хĕвелтен те хитререх.
Ху та эс хĕрелнипе
Пит чипер - çырла пекех.

# ФРАНЧЕСКО ПЕТРАРКА

Италири Петрарка виличчен
Ытарайми Лаурăна юратнă,
Çĕр-çĕр сонет вăл çырнă ун çинчен,
Шел, сăвăç телейне ирех çухатнă.

Тусне аса илсе поэт куллен
Çĕн йĕркесем илемлĕн шăрçаланă.
Лаура унăн чĕринче вилмен -
Сонетсене куçса çӳле ăсаннă.

Умри сăртсем, садри çăл куç таппи
Лаура пурнăçне аса илтернĕ.
Петрарка пĕлнĕ: сăвăçăн шăпи
Ăна пĕр çынна çеç савма пилленĕ.

Манман вăл: итальянкăн чунĕпе
Ун кăмăлĕн хĕвелĕ пĕр хевтеллĕ.
Франческо идеалшăн çуннипе
Мадонна ячĕ пулнă ун эмелĕ.

Вăл çавăнпа нихçан та сивĕнмен
Поэзи алăкне уçма пултарнă.
Ăна пулах Лаура та вилмен -
Вилсессĕн те кĕтме хавхалантарнă...

Маттур Петрарка евĕр эпĕ те
Ĕмĕрлĕхех тантăшăма юратрăм.
Кайма тивес пулсассăн пĕлĕте
Çĕклентĕрччĕ савни патне хăватăм...

## САН ÇИНЧЕН МАН ШУХĂШЛАС КИЛЕТ

Шухăшлас килет ман сан çинчен,
Пĕлейместĕп эсĕ ăçтине.
Чĕремре салхуллă. Эп пĕччен.
Урамра уяртрĕ каçхине.

Уйăх тухрĕ, пĕлĕт кăн-кăвак.
Çепĕç куçусем те çавнашкал.
Сывлăмланчĕ эсĕ ларнă сак.
Ма çухалтăн? Пушă пек халь ял.

Лăпкă сассуна асилтерет
Çырмара çăлкуç шăкăлтатни.
Сан çинчен ман шухăшлас килет.
Эсĕ манăн тусăм, чун савни.

* * *

Тӳпе тюльпан пек хĕрелсен
Савни тухать килтен.
Салам ăна тусĕсенчен,
Унран эп сивĕнмен.

Юратнă çын каять ĕçе,
Сар çӳçĕ вĕлкĕшет.
Ун çивĕчĕ шыв пек çемçе -
Вăл питĕ килĕшет.

Хĕвел хĕре курнипеле
Тен, чăн та хĕпĕртет -
Кулать чун савнипе пĕрле.
Чĕрем те ирĕлет...

* * *

Йăрăс пилĕклĕ,
Сарă çивĕтлĕ.
Çăмăллăн утать чун савни.
Хĕпĕртет чĕре
Тĕл пулсан хĕре.
Пĕр эрне ăна курманни.

Уйăх çутинче,
Кӳлĕ çумĕнче
Кил, савни, çӳрер уçăлса.
Лайăх мĕн тери
Юрату пурри,
Хаклă çын пăхсан йăл кулса.

Çепĕç тунсăхпа,
Ăшă сăмахпа
Пурăнтăм ăна асилсе.
Ыйăха татса
Кĕтрĕм пăлханса
Савăнăçлă кун çитессе.

* * *

Çăлтăрсем çиçме пуçларĕç,
Уйăх ӳкрĕ пĕвене...
Кĕренленчĕ хĕвеланăç,
Каç пăлхатрĕ чĕрене.

Икĕ шăпчăк курăнмасăр
Сас параççĕ ăмăртса.
Савни, питĕ япăх сансăр,
Ма килместĕн йăл кулса?

Вĕршĕн кайăк пурăнмашкăн
Çыр хĕрне çеç кăмăллать.

Манăн чун вăййа тухмашкăн
Савнипе çеç юратать.

* * *

Вăранатăп та ятна калатăп.
Асилетĕп ырă сăнарна.
Кăн-кăвак куçсен тĕсне куратăп,
Чунăмпа туятăп сассуна.

Сар çÿçÿн вылянăвĕ çăп-çăмăл,
Çут хĕвеллĕ ун пайăркисем.
Эс асра чух лайăх манăн кăмăл,
Çепĕç туйăмпа тапать чĕрем.

Санăн тутусем çырла пек хÿхĕм,
Çил кулса яни пек йăл куллу...
Чĕрÿнте сан пур пек пысăк тÿсĕм,
Çавăнпа пуль çитрĕ тĕл пулу.

Эп сана поэт пек юрататăп:
Пил парса, чунтан хисеплесе...
Ятупах эп çывăрма выртатăп,
Вăранатăп эсĕ пур тесе.

* * *

Чун савни, калаçăву
Ăслă, ырă, çепĕç:
Тĕрĕс пĕтĕм ыйтăву -
Нимшĕн те тиркеймĕç.

Эпĕ эс калаçнине
Пăлханса итлетĕп.
Тавтапуç сан чĕрӳне,
Йăлт унран - пĕлетĕп.

Çынлăхна, сăпайлăхна
Эс унран илетĕн.
Манаймастăп эп сана,
Асăмрах çӳретĕн.

Илемӳ, маттурлăху
Кăмăла çĕклерĕç.
Ăшă сан пур сăмаху,
Сăн-питӳ те çепĕç.

Эс мана ал памасан,
Кай, ан кил тесессĕн.
Чунăм халсăрланĕ ман,
Ишĕлĕ кĕтесĕм.

Эс таса сăмахлани
Пил пек килĕшӳллĕ.
Пул телейлĕ, чун савни,
Ĕмĕр йăрăс пӳллĕ.

Эс мана тиркессинчен
Вилесле хăратăп.
Пĕтĕм юррăм сан çинчен,
Саншăн пурăнатăп.

* * *

Пăхатăп çутă çăлтăр çинелле.
Тӳпе хура. Ӳкет раштав хĕлхемĕ...
Юр çăвайман-ха. Васкамасть хĕлле.
Плафон çутисенче çеç - каç илемĕ.

Балконлă çӳллĕ çуртăн тăрринчен
Вĕçет хĕлхем - ӳркенчĕклĕн, тирпейлĕн.
Шур юр пĕрчи вăл - çаврăнать хуллен,
Çут çăлтăра асилтересшĕн тейĕн.

Çут çăлтăра сăнатăп ăмсанса -
Ыран та тухĕ вăл çиçсе илемлĕн.
Шур юр çеçки ӳкет хĕлхем пулса,
Хĕлхем сӳнет - курса та ĕлкĕреймĕн.

Асра савни - илемлĕ çăлтăр пек
Умма тухать куллен - инçе пулин те.
Юратăва ан тивтĕрччĕ инкек,
Хĕр тусăма саватăп питĕ-питĕ.

* * *

Тавах çут çанталăк - хитрелĕх ăсти,
Тавах, тавтапуç, ашшĕ-амăшĕ.
Епле килĕшӳллĕ ман тусăн тути.
Сăнне турă хăй йăвалана-ши?

Пăхатăп хаваслăн савниçĕм çине:
Ун пурте таса та виçеллĕ-çке!
Кăларнă çын вăйĕ илем тĕнчене,
Илемĕн те ячĕ пур - Женечка!

* * *

Сивĕ çумăр йĕрет кантăкран шаккаса.
Чўрече çăвăнать хурлăхпа.
Эп чăнах-ши çухатрăм чи хаклă туса?
Чун-чĕре касăлать асаппа.

Тумламсем кантăкран перĕнеççĕ лексе...
Никама та кĕртместĕп киле.
Хуйхă çыпçăннă шăппăн кашни кĕтесе.
Мĕнлерех лăпланма пĕлмелле?

Сивĕ çумăр тулта чарăнми макăрать,
Кантăк тăрăх юхать сив куççуль.
Пуçăмра тĕрлĕ шухăш тĕнчи çаврăнать,
Каç юри кĕçĕр çăлтăрсăр пуль.

Тусăм, кил,
Тусăм, кил,
Тусăм, кил,
Ан çухал,
Эс килсессĕн кăна
Ўсĕ манăн вăй-хал.

* * *

Эп шухăш парăсне сан еннелле пăратăп,
Ятна каланипех кăрт-кăрт сикет чĕре.
Сана аса илсе ырăлăхра çунатăп,
Шăнатăп ăшăра, тарлатăп сивĕре.

Сана юратнипе эп чикĕсĕр телейлĕ.
Çунатлă ĕмĕтсем чĕнеççĕ савăнма.
Эс ăшшăн пăхнипе кун-çулăм та хĕвеллĕ,
Чечеклĕ шанчăксем лăпкаççĕ чунăма.

Çапах хăш-пĕр чухне асаплă шухăш витĕр
Пăхатăп тунсăхпа ăнман кунсен енне.
Сана уяв чухне курасшăнччĕ эп питĕ,
Анчах килмерĕн эс телейĕм вăййине.

Эп сан ятна манса çут уйăха сăнатăп.
Куратăп пек унта эс ăшшăн кулнине.
Сана та яланах хитре кунсем сунатăп
Хавасланса пăхма килтен тĕнче çине...

## ТЕЛЕФОНПА КАЛАÇНИ

Сассуна илтсессĕн паллаймарăм
Калаçма тăрсан телефонпа.
Питĕ çепĕç-çке тесе шутларăм -
Сăмахларăн ырă кăмăлпа.

Сассунта - ачашлăх та сăпайлăх.
Тен, унта сан чун-чĕрӳн ăшши.
Эпĕ пуплеме пĕлмерĕм лайăх.
Ман пирки эс мĕн шутларăн-ши?

Эс мана пачах пĕлместĕп терĕн,
Ăнланман пек кам калаçнине.
Ят-сумна пĕрре те ӳкермерĕн,
Кĕтрĕн эп чуна уçассине.

Эп ку, эп ку саншăн çунаканĕ,
Чĕререн сана юратакан.
Манăн ăшăм майĕпен лăпланĕ
Эс манпа юлташ пек калаçсан.

## КĂВАК КУÇСЕМ

Кăвак куçусенче - эп ăнланман тĕнче.
Вĕсен сенкерлĕхĕ тĕлĕнмелле илемлĕ.
Тăп-тăрă çăл çути эс пăхнинче.
Вăрман çырлин уçланкăри хĕвелĕ.

Утмăлтурат çеçкисене курсан,
Кăвак сирень хĕмне асăрхасассăн,
Сана аса илетĕп эп ялан,
Ятна калатăп ăшшăн та хавассăн.

Сан куçусем çурхи ир пек кăвак,
Çил пек сенкер, кăвайт шевли пек ăшă.
Ман çинелле пăхсамччĕ эс пăртак,
Эп сан валли ача пек çыхрăм кăшăл.

Анчах та эс мана курман пекех
Ним калаçми таçта пăхса тăратăн.
Эп пăлханни нивушлĕ пурпĕрех?
Кăвак кӳлĕсенче - çăлсам - путатăп.

## ĂМСАНУ

Пĕве шывне эп ăмсанатăп.
Эп кĕвĕçетĕп тĕкĕртен,
Çут хĕвелтен, тулли е катăк
Сар уйăхран, çăлтăрсенчен...

Вĕсем сана куллен кураççĕ,
Сăнна пăхаççĕ киленсе,
Шăрçусемпе йăлтăртатаççĕ
Илемӳпе хĕлхемленсе.

Вăчăруна та ăмсанатăп
Ыталанишĕн мăйунтан...
Ĕмĕтленсе эп пурăнатăп
Сан çумăнта пулма ялан.

## ХУЙХĂ

«Сана юратман, юратассăм та çук,
Эп эс мĕнлине тĕрĕслерĕм», -
Тесен чун савни, пуçăмран мăлатук
Кисретнĕн кăшт çеç эп ÿкмерĕм.

Епле-ха айван пек уçса чĕрене
Эп çамрăк упа пек амантăм?
Ма кĕтĕм-ши эп юрату вăрманне?
Таптанчĕ ÿксе вăй-хăватăм!

Памасть çĕрĕпех куç хупмашкăн суран...
Телейĕм ĕнер çывăхрахчĕ.
Пĕлетĕп: ют çын эп - савнишĕн паян.
Тин çеç шанчăксем йăлтăрккаччĕ...

## АН ЮРАТ

Ан юрат! Ан юрат! Ан юрат!
Эс манран тем пирки пăрăнатăн.
Эп туянтăм вĕри саламат...
Вăйĕ пĕтрĕ чунран асаматăн.

Çĕрĕпех манăн ăшăм вăркать
Мăрьере сивĕ çил йĕнĕ евĕр...
Тÿперен уйăх хуйхă акать,
Куçăмсем пек йĕпе симĕс клевер...

Пурпĕрех сивĕнмен-ха чĕрем:
Эп санах, эп санах юрататăп!
Сирпĕнет кăвайтран çут хĕлхем,
Çулăмра хам сăна эп куратăп...

* * *

Сансăр манăн канăç çук,
Лăпланма пĕлмест чĕре.
Асăмра — кăвак уçу,
Эс пĕрре çут тĕнчере.

Юрататăп эп сана,
Кĕт, савниçĕм, эс мана,
Сансăр эп пурăнаймастăп.
Чунăмра та эс кăна.

Чечек пек сăну чипер,
Тутусем пыл пек пылак,
Калаçсам эс, çепĕçскер,
Лар манпа садра пăртак,

Мăшăр шăпчăк пахчара,
Ăмăртаççĕ юрласа.
Çамрăксем — укăлчара...
Ир килет пире савса.

* * *

Хут купăсăм, хут купăсăм ăçта-ши?
Шăрантарса ярасчĕ чăвашла!
Туссем, мана халь кирлĕ шухă ташă,
Хĕрсем, вĕçсемĕр шурă акăшла...

Хут купăсăм кĕрен те сар пĕрмеллĕ.
Йăлтăртатаççĕ куçлă тӳмисем.
Хавхалансах, туссем, сире парнелĕп
Вут-çулăмлă, çунатлă кĕвĕсем.

Пӳрнесене ахах çинче чуптарăп
Чи çывăх сасăсем шыраттарса.
Сире сиктерĕп, çавăрăп, шутарăп,
Янăратса умри тăван каса.

Чăннипеле вара, туссем, ман халĕ
Салхуллăн юрласа ярас килет.
Пĕр сарă хĕршĕн пиçрĕ чун хавалĕ,
Нумай кăтартрĕ ăш çунтармăш терт.

Ăна макăртмалла каласчĕ манăн
Чунри кĕвĕсене эрешлесе.
Куççульлĕ вăхăт та пулать юманăн,
Çапах ăна ан иртĕр тиркесе.

* * *

Сана кĕтсе каллех канăçсăрлантăм,
Çапах эс курăнмастăн çул çинче.
Эп саншăн çунтăм, макăртăм, хурлантăм,
Ыйха çухатрăм çур çĕр тĕлĕнче.

Миçе хутчен шухăшламарăм пулĕ
Сенкер чечек пек куçусем çинчен!
Пўрт çутинче ман ялкăшрĕ куççулĕ,
Çывăраймарăм шуçăм киличчен.

Ак эп каллех çул çинелле пăхатăп,
Анчах умра - кăвак инçет кăна...
Эп пăлханатăп, эпĕ юрататăп
Сана, сăнна, чунна, сăпайлăхна.

* * *

Акацисен чечекĕсем сап-сарă,
Пыл хурчĕсен те ĕç, те карнавал...
Чикен туратсене савса сăнарăм,
Тен, вĕсене юратнă çын сахал.

Çумна çыпăçакан мĕн чухлĕ пулнă,
Чун савнăскерĕм, хулапа ялта.
Çулăхнисем хыçра салхуллăн юлнă,
Эс ху патна яман хăямата.

Тавах сана мана çеç юратнишĕн,
Куç шăрçи пек упранăшăн чысна.
Эп çавăнпа хăрамăп пулассишĕн,
Эс, ман чечекĕм, ырă, ăрасна.

* * *

Таса хирсем, чăпар тăвайккисем,
Çурхи пĕвен хĕвеллĕ ялтăравĕ
Йăлтах хитре, анчах эс тĕп илем,
Эс ман чĕре уявĕсен сăлтавĕ.

Сана пăхса ман савăнас килет,
Пион çеçки яка, анчах питӳ сан
Унран та якарах. Чун киленет
Эс чиперришĕн.Пур халь манăн тӳсĕм!

Эп кăмăлна ырлатăп час-часах,
Куллу, сассу, утту - йăлт килĕшӳллĕ!
Санпа эп калаçатăп савăнсах,
Ешерекен хаваслăх сăрчĕ çӳллĕ!

* * *

Пурнăçăмра эс пур та - эп çунатлă.
Хăш чух саркайăк пек юрлас килет.
Юратăвăн асамĕ ыр хăватлă,
Мана йывăрлăхран тухма çĕклет.

Салхулăхпа асап çырмисене те
Эп леккелетĕп вăхăт шунă май.
Ун пек чухне сана аса илетĕп,
Вара мана çăмăлтарах чылай.

Эс пур та манăн - эпĕ çухатмастăп,
Кун ăнмасассăн, шанчăк çутине.
Пĕлет чĕрем, пĕччен пурăнаймастăп,
Санран уйрăлас марччĕ ĕмĕрне.

* * *

Чĕкеç йăви алкум кĕтессинчех!
Манран пĕр хăрамасть-çке шухă кайăк!
Пушанчĕ тăм хваттер çу вĕçĕнчех...
Ун хуçине халь турккă çĕрĕ лайăх.

Манран пĕр шикленместчĕ савнă хĕр,
Анне патне килех килсе çӳретчĕ.
Анчах сисмерĕм - çитрĕ сулхăн кĕр.
Чипер пикеçĕм хулана вĕçтерчĕ.

Унта вăл вĕренӳ керменĕнче
Пĕлӳлĕх тĕнчине хастар тĕпчерĕ.
Ун сăнĕ чун-чĕреçĕм варринче
Чи ырă, çепĕç туйăм пек çӳрерĕ.

Шур кофтăллă ĕçчен хура чĕкеç
Çу çитеспе садра каллех сас пачĕ...
Савниçĕм килĕ çимĕк хыççăн çеç,
Вăл ман ăша комета пек çунтарчĕ...

* * *

Сан кăмăлу типтерлĕ те черчен,
Нихçан та тусăм, эсĕ ятлаçмастăн.
Сана эп юрататăп чĕререн,
Эс пуррипе çӳретĕп-çке хаваслăн.

Анчах эп сан салхулăхна курсан
Шӳте манса тăрук йăвашланатăп.
Сана ман пулăшас килет чунтан,
Эп çав самант ĕçпе юлташланатăп.

Сана ман йăпатса ларас килет.
Эп ун чухне çиле çĕнме те хатĕр.
Хурланăву сан хăвăрттăн иртет —
Шала кĕрсе чылайлăх пытанать-тĕр...

* * *

Юратăвăн ик куçĕ те курмасть,
Ман куçăмсем пурне те асăрхаççĕ.
Савсассăн хурламашкăн юрамасть,
Юратнăран çынсем мăшăрланаççĕ.

Эп юрататăп. Пĕртте суккăр мар.
Савнин хури-шурри мана йăлт паллă.
Пире чĕнет кăварлă сăмавар,
Кам каçарать — ун чунĕ пархатарлă.

Савни куçĕсенче — кăвак тĕнче.
Сăн-питĕнче — ачашлăхпа йăвашлăх.
Асамлă ырлăх хĕрĕн тутинче,
Апла пулсан телейлĕ манăн яшлăх!

## МЕДСЕСТРА

Эс тухтăр ыйтнă пек ĕçлетĕн.
Эс шур халатлă медсестра.
Çын асапне туйма пĕлетĕн,
Ыр сăнару ялан асра.

Палатăна пырса кĕретĕн
Эс питĕ кирлĕ самантра.
Пире йĕппе тирсе пиллетĕн
Телейлĕ сывлăх, медсестра...

Ӳте эмел тумлаттаратăн
Кăвак юн тымарне тупса.
Им-çам сĕретĕн, шыв паратăн
Çăвар типсессĕн, медсестра.

Сурансене çыхса яратăн,
Ун чух пит йывăр пуль чунна...
Ыратнă чух вăй-хал паратăн.
Кĕтетпĕр, медсестра, сана.

* * *

Нимшӗн те тек кулянмастӑп.
Иртрӗ. Ҫухалчӗ... Шел мар.
Сив кӑвайта пӑлхатмастӑп,
Сӳнчӗ куҫ уҫнӑ кӑвар...

Тӑкрӗ чие шурӑ ҫӑлтӑр
Ҫил вӗрнӗҫем пахчара...
Уйӑх ҫиҫет йӑлтӑр-йӑлтӑр.
Манӑн асап — ыйхӑра...

Ёнтӗ сассу илтӗнни те
Шанчӑк хӗмне вӑратмасть.
Хытӑ тертлетӗм эп. Ҫитӗ.
Тек ман чӗре ыратмасть.

## ТУПМАЛЛИ

ЧĂВАШ ÇĔР-ШЫВĔ .......... 3
ЕШĔЛ ЧĂРĂШ .......... 4
ПАХЧАРИ ЧИЕСЕМ .......... 5
«Лупашкари шевле...» .......... 6
«Тимлĕ кайăк евĕр вичкĕн...» .......... 6
«Мĕн çӳлтен-çӳлтен анать...» .......... 7
ТЕЛЕЙЛĔ ТАПХĂР .......... 8
ÇĔРЛЕ .......... 9
ВĂЙĂ ШАЛЧИ .......... 10
«Пĕр сăрланман эсĕ - пур пĕр чипер...» .......... 10
ХАМĂР ЯЛ .......... 11
КĂМПАСЕНЕ КУРСАН .......... 12
«Çумăр арфа пек тăнă чухне...» .......... 12
Земфирăна .......... 13
«Сана манатăп та каллех аса илетĕп...» .......... 14
«Таса кăвак куçусене...» .......... 14
«Шуçăм пек хитрелетрĕн...» .......... 15
«Ăвăс папкисем вăраннă...» .......... 15
ПАЛЛАЙМАРĂМ .......... 16
«Епле юсав та килĕшӳллĕ...» .......... 17
ЁМĔТ .......... 18
ЮРАТĂВĂМ .......... 19
«Сăпайлăх туйăмĕ санра, паллах, нумай...» .......... 19
ХĔЛ МУЧИ - ӲНЕРÇĔ .......... 20
«Эс мана шырарăн - тупаймарăн...» .......... 20
ВУН САККĂРТА .......... 21
«Йĕпе юр пĕрчисем...» .......... 22
ПĔЧĔК ПӲРНЕСЕМ .......... 24
ÇИРĔМ ВИÇÇĔРЕ .......... 24
«Шуралчĕ пĕлĕт...» .......... 25
«Кăн-кăвак илемлĕ куçлă...» .......... 26
«Хăйăр, Атăл, йăмрасем...» .......... 27
«Ун питĕнче эп сивĕлĕх шырарăм...» .......... 28
ТЕАТРТА .......... 28
ГИТАРĂПА .......... 29
«Шап-шурă юр хăрпăкĕсем...» .......... 30
КИВ ÇĔН ÇУЛТА .......... 31
ЧИ КИРЛИ .......... 31
ТĂВАН УРАМ .......... 32

УЙĂХЛĂ КАÇ ........ 33
«Вĕл-вĕл чечек, кĕрен чечек...» ........ 33
ПАС ТЫТНĂ КУН ........ 34
ÇАТАН КАРТА ........ 34
ТУХЬЯ ........ 35
ТĂВАН КИЛ-ÇУРТ ........ 36
ЭНĔШ ÇУМĔНЧИ ЯЛТА ........ 37
ÇУТĂ КАÇ ........ 38
КАНĂÇСĂР ВĂХĂТ ........ 38
САНСĂР ........ 39
«Ку ялта - хăва шăрши...» ........ 40
КАЙĂКСЕМ ........ 40
ХĔЛЛЕХИ КАÇ ........ 41
АШШĔ-АМĂШ КИЛĔ ........ 42
«Вăтанатăн эс манран...» ........ 43
ФРАНЧЕСКО ПЕТРАРКА ........ 44
САН ÇИНЧЕН МАН ШУХĂШЛАС КИЛЕТ ........ 45
«Тӳпе тюльпан пек хĕрелсен...» ........ 45
«Йăрăс пилĕклĕ...» ........ 46
«Çăлтăрсем çиçме пуçларĕç...» ........ 46
«Вăранатăп та ятна калатăп...» ........ 47
«Чун савни, калаçăву...» ........ 48
«Пăхатăп çутă çăлтăр çинелле...» ........ 49
«Тавах çут çанталăк - хитрелĕх ăсти...» ........ 49
«Сивĕ çумăр йĕрет кантăкран шаккаса...» ........ 50
«Эп шухăш парăсне сан еннелле пăратăп...» ........ 51
ТЕЛЕФОНПА КАЛАÇНИ ........ 51
КĂВАК КУÇСЕМ ........ 52
ĂМСАНУ ........ 53
ХУЙХĂ ........ 54
АН ЮРАТ ........ 54
«Сансăр манăн канăç çук...» ........ 55
«Хут купăсăм, хут купăсăм ăçта-ши?..» ........ 55
«Сана кĕтсе каллех канăçсăрлантăм...» ........ 56
«Акацисен чечекĕсем сап-сарă...» ........ 56
«Таса хирсем, чăпар тăвайккисем...» ........ 57
«Пурнăçăмра эс пур та - эп çунатлă...» ........ 57
«Чĕкеç йăви алкум кĕтессинчех!..» ........ 58
«Сан кăмăлу типтерлĕ те черчен...» ........ 59
«Юратăвăн ик куçĕ те курмасть...» ........ 59
МЕДСЕСТРА ........ 60
«Нимшĕн те тек кулянмастăп...» ........ 61

**Михаил Александрович Андреев**

**КРАСИВ БЫЛ БЕЛЫЙ ЗВЕЗДОПАД...**

**Стихи**

На чувашском языке

Верстка *Максимовой А.Г.*
Дизайн обложки *Семеновой Н.В.*

Подписано к печати 26.05.09.Формат 60x84/16.
Бумага офсетная. Печать оперативная.
Физ. печ. л. 4. Тираж 200 экз. Заказ № 104.

Отпечатано в типографии «Новое Время».
428034. г. Чебоксары, ул. Мичмана Павлова. 50/1.
Тел., (8352) 41-27-98. E-mail:newtime1@mail.ru.

20.00



